Василев П. Иванов палăкĕ: [сăвă] / Павел Васильев
// Хыпар. – 2004. – 28 çу

*Павел (*

# ИВАНОВ ПАЛĂКĔ

Тухăçран кăвак çут килессе
Кĕтнĕ пек вăл сăнать ир те каç.
Хулари çак сăвап кĕтесе
Çаврăнса тухмасан чун чăтмасть.
Сарăлать, çĕкленет Шупашкар,
Кăп-кăтра çăкасем йĕркерен.
Çурчĕсем керменрен кая мар
Паянхи Нарсписен, Сетнерсен.
Тинĕс пек шыв тăрать ку тĕлте,
Картлашкаллă бетон витнĕ çыр.
Кармашать çĕн чиркӳ пĕлĕте, –
Хăть халех ун çинчен сăвă çыр.
Пăрахут чарăнсан кукăрта –
Палăку умĕнче – хăнасем.
Пуç таймашкăн васкаççĕ кунта
Ватăлан поэтсем, çамрăксем...

* * *